Тěнчери финанспа экономика кризисě

# Эпир те айккинче юлаймастпăр

***Паян пěтěм тěнчери финанспа экономика кризисě пирки телевизорпа та, радиопа та, хаçат-журналсенче те çыраççě-калаççě. Пěтěм тěнче пирěнтен инçетре темелле, анчах вăл тěнче пирěнтен пуçланмасть-и-ха? Туятпăр-и эпир экономикăри çак улшăнусене? Çак ыйтусем паян районта пурăнакан кашни çыннах канăç памаççě. Пěтěм тěнчери экономика кризисě мěнле килсе çапрě-ха пирěн района? Çак ыйтупа паян хăйěн шухăшěсене район администрацийěн экономика пайěн пуçлăхě Эльвира Иосифовна СИМАКОВА паллаштарать:***

– Кризис витěмě куç кěрет. Пěтěм тěнчери финанспа экономика кризисě никама та айккинче хăвармасть, паллах. Эпир те ăна туйма пуçларăмăр. Уйрăмах финанс тěлěшпе ыйтусем йывăрланни тата производство чакни енчен сисěнет вăл. Эпир те тěнчен уйрăлми пěр пайě пулнăран пěтěм тěнчери финанспа экономика кризисěнчен пăрăнса юлайрас çукки паян кашниншěнех паллă.

Финанс кризисне кура иртнě çулхи кěркуннерен ěççěррисен йышě ўсни сисěнет. Уйрăмах промышленность производстви çинче унăн витěмě ытларах палăрать. Кунта «Сеспель» хупă тата «Муркашри кирпěч завочě» усă акционерлă обществăсем ытларах йывăрлăх тўсеççě. Кризис витěмне кашниех сисетпěр пулин те, унăн витěмне паян цифрăллă кăтартусемпе хаклаймастпăр, мěншěн тесен кунта коммерцилле вăрттăнлăх сěмě те сисěнет.

Районта экономикăри тěрлě сферăсенче ěçлекенсем хушшинчи ěç-хěле йěркелентерсе пырса кризиспа кěрешме ведомствăсем хушшинчи комиссие йěркелерěмěр. Пěтěм харпăрлăх формиллě предприятисен ěçне координацилесе тăмалли мероприятисен планне хатěрлерěмěр.

Социаллă пěлтерěшлě пысăк предприятисенчи экономика лару-тăрăвне эрнесерен анкетăласа тăратпăр. Хальлěхе пěтěмлетсе çапла калама пулать: финанс лару-тăрăвě питě курăмлă улшăнни хальлěхе курăнсах каймасть. Предприятисем кредит ресурсěсемпе усă кураççě. Тавар туянакансен тўлеслěхě чакни сисěнет. Ăна кура тавар кўрсе килекенсемпе тўлесе татасси те йывăрланни палăрать.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечěн «2009 çулта Чăваш Республикинче пурăнакансене ěçпе тивěçтерессипе хушма пулăшу парассипе республикăн тěллевлě программи çинчен» йышăнăвě кун çути курчě. Унта ěçрен хăтарнă çынсем валли ěç паракансем вăхăтлăх ěç вырăнěсем парассине тата çынсене профессиллě пěлў парассине пăхса хăварнă. Кусемпе пěрлех йышăнура адреслă пулăшу парасси те, пěчěк предпринимательство йěркелессипе пулăшасси те пур.

Бюджет тăкакěсен виçине оптимизацилессипе бюджет укçи-тенкипе тăтăш эффективлă усă курма тивет.

Пур çěрте те йěрке пурри, власть тата ěç паракансем ответлăха çухатманни кулленхи ыйтусене оперативлă татса пама май парать. Ку вара çынсенче шанчăк çуратать, вěсене иккěленўсěрех малашлăха пăхтарать.

Района йěркеленнěренпе 65 çул çитнě май

# «Халăхран аш-çу пухса района çěклерěмěр»

Çакнашкал çирěплетрě хамăрăн пěтěмěшле калаçăва районăмăр йěркеленнěренпе 65 çул çитнине халалласа иртттернě тěл пулура Муркаш Ен аталанăвěнче тарăн йěр хăварнă Георгий Арсеньевич Мартынов.

Муркашри хěл лăпкăлăхěнчи канлě ыйхăри Фронтовая урампа пыратăп. Акă урам пуçламăшěнчи тирпейлěхпе уйрăлса тăракан çурт. Килçурт тирпейлě пулсан, хуçисем те тараватлă, теççě те, çак ырă шухăшпа кил хушши алăкне пырса тытрăм. Йытă вěрсе ячě те мана хирěç пěр тăпăл-тăпăл асанне тухрě. Унпа калаçма пуçласан малтанхи сăмахсенченех кил хуçисен тараватлăхě ума тухрě.

– Георгий Арсентьевича утма йывăртарах та вăл йăпăр-япăр хăнасене кěтме тухаймасть. Ан çилленěр, пўртелле иртěр, – пулчě кăмăллă йышăну.

Пўртелле иртнěçемěн асаттепе асанне тирпейлě пурăннинчен тěлěнсех кěтěм.

– Тирпейлěх вăл килте те, урамра та, ялта та пулмалла. Ку вăл пирěн пурнăç. Ăна кура пире хакласçě, – кěтсе илчě сăн ўкерчěксен альбомěсем выртакан сěтел патне йыхравласа кăштăртатса çўрекен Георгий Арсентьевич. Кунти сăн ўкерчěксене пăхсан вара районăн 65 çулхи нумай «вăрттăнлăхěсем» куç умне тухаççě. 1922 çулхи апрелěн 13-мěшěнче хресчен çемйинче çуралнă Георгий Арсентьевичăн та каласа памалли чылай. 1941 çулта 10 класс пěтерсенех фронта кайнăскер, салтакран тăван киле 1947 çулта çеç çаврăнса çитет. «Вăрçă чарăнсан çар валли кадрсем нумай хатěрлемелле пулчě», – тет ветеран хăйěн салтак служби вăрăма тăсăлнине ăнлантарса. Киле таврăнсан та иккěмěш тěнче вăрçин паттăрне лăпкă пурнăç кěтмен. Çартан таврăнсанах вăл пилěк çул районти çар комиссариатěнче ěçлет. Ěçре тăрăшулăх кăтартнăскере 1952 çулта коммунистсен партийěн Муркашри райкомне инструктор-пропагандист пулса ěçлеме куçараççě.

– Район аталанăвěшěн тимлемелли питех те нумаййчě. Ěç дисциплини çине пысăк тимлěх уйăраттăмăр. Техника юсавлă ěçлени, хирте çухатусем туманни, ўстернě тыр-пула пěтěмпех пуçтарса кěртни, ял хуçалăх çěрěсем пушă выртманни т. ыт. те. Кашни ответлă ěçченех тупăннă çитменлěхсемшěн хытă айăпланă. Çакна курсатăрса халăх та тăрăшуллăрах та тирпейлěрех ěçлетчě, – аса илчě 1959 çулта район пěтнě хыççăн хăй те Евтихий Андреев ертсе пыракан колхоза партком секретарě пулса ěçлеме куçнине уйрăммăн палăртса. Социализмла Ěç Геройěпе пěр урапа çинче ěçлени хăйěншěн пысăк урок пулнине Георгий Арсентьевич паян та ырăпа асăнать. Хыççăн тепěр хушă «Муркашри ял хуçалăх техники» предприятире Александр Ильич Кушковпа ěçленине те ветеран хăйěн ěç ěмěрěн лайăх вăхăчě тесе палăртать. «Çирěп ыйтатчě, тěрěслěхшěн çунатчě, ěçлекенсен ыйтăвěсене иккěмěш вырăна хăвармастчě», – терě Г. Мартынов хăйсем А. Кушковпа, предприятири пултаруллă инженерпа В. Алексеевпа 1972 çулта Çуркуннепе Ěç уявне паллă тума кайнине сăнлакан сăн ўкерчěк çине пăхса.

Çакăн хыççăнах иртнě суйлавра Г. Мартынова Муркаш ял Совечěн председательне суйлаççě.

– Ěçлекен çын валли çăмăл вырăн çук. Çěр-шыв тěреклěхне çирěп тытас тěллевпе вăл вăхăтра халăхран сěт, çу, çăмарта, çăм, аш-какай пуçтарассипе тимлени тата ку тěлěшпе плана тултармасан райкомрисем пит хěретни халě те асрах. Анчах эпир хамăр ума лартнă тěллевсене пур-пěрех пурнăçлаттăмăр, – терě хăй ял Совет председателěнче чылай ěçленине палăртса çиччě виççе калаçакан Георгий Арсентьевич. Ветеран шучěпе вăл вăхăтри ял Совечěсен председателěсем пěри те юлхавлă ěçлемен. Вěсем хушшинче пěр-пěрин опычěпе паллашсах тăни те ěççене хăй еккипе яма паман. Вěсем пěрле пулса район делегацийě шучěпе республикăна тухни те пěрре мар пулнă. Çаксене паян Г. Мартынов йăлтах ăшшăн аса илет.

– Тавах пирěн ěççене паян малалла тăсакансене. Муркаш ял тăрăхěн пуçлăхě Н. Никитин тăрăшнипе Муркаш сали юлашки çулсенче тěпрен улшăнни савăнтарать. Тирпейлěх хуçаланать паян Муркашра. Ку вара савăнăçлă пулăм, – терě Георгий Арсентьевич паянхи ял тăрăхěн пуçлăхě хăйěн патне час-часах канашлама кěнине ырăпа палăртса.

Самантлăха та алă усман Г. Мартынов 1950 çулта Етěрнери педучилище хыççăн Муркашри вăтам шкула пионервожатăй пулса ěçлеме килнě Мария Прохоровнапа çемье çаврăнă та 3 ача çуратса ўстернě: Юра – водитель, Валера – хирург, Ира – учительница. Мария Прохоровна шкулта, комсомол райкомěнче, КПСС райкомěнче – пěтěмпе 32 çул библиотекăра ěçленě. Халăх пурнăçěшěн вăй хунă мăшăр паян та ялта ятлă та сумлă.

**Анатолий БЕЛОВ.**



**Сăн ўкерчěкре: Муркаш тăрăхěнчи ялсенчи ěç тăвакан комитетсен председателěсем республикăри семинар-канашлура (1973 çулхи чўк уйăхěн 21-22-мěшěсем. Шупашкар хули. Иккěмěш ретре сулахайри – Г. А. Мартынов).**

Килти хушма хуçалăх

# Пуласси пирки паян шутламалла

***Çěр ěçченěн тата пахчаçăн урамра сивě шатăртаттарнине пăхмасăрах пушă вăхăтпа усă курса кăçалхи тухăç пирки паян пуç ватмалла. Кунта кая юлмасăр тумалли ěççем те çук марах-тăр. Мěн тумалла-ха пахчара чир-чěрпе сăтăрçă хурт-кăпшанкăсем сахалрах пулччăр тесен?***

**Сирěн ырă канашăрсене шанса**
**Ф. И. ИГНАТОВ.**

***Вулавçă ыйтăвěпе «Россельхозцентр» ФГУн Чăваш Республикинчи филиалěн Муркаш районěнчи уйрăмěн тěп специалистне Алексей Семенович СЕМЕНОВА паллаштартăмăр. Специалистăн хуравě анлă та ăнлантаруллă пулчě. Ăна халě вулакансене сěнетпěр.***

– Шартлама сивěрех çěр ěçченě çитес çур аки пирки шутланине ырлатăп кăна. Чăнах та, мěн тумалла-ха пахчара чир-чěрпе сăтăрçă хурт-кăпшанкăсем сахалрах пулччăр тесен? Çак ыйтăва татса парас тесен паянах çанă тавăрса ěçлемелле. Мěншěн тесен пахчари ўсен-тăранăн та, пухса илнě хыççăн упрама хунă пахча çимěççен те сăтăрçисемпе чир-чěрěсем питě нумай. Çавăнпа та сире хумхантаракан ыйтăва хăвăр вăхăтра татса памасан, садпа пахча çимěç тухăçě те палăрмаллах чакма пултарать.

Çак çухатуран пăрăнас тесен, татах калатăп, нумай ěçлемелле, ěççене хěл кунěсенчех пуçăнмалла. Кăçал юр сахаллипе усă курса малтанах шăшисемпе вěсем евěр чěр чунсене хирěç кěрешме пахчари усăрах вырăнсене тата путвалсене родентицидсем (приманка препаратсем) хурса тухмалла. Усă çěрте вěсене шăтăксен анисенех хумалла та çиелтен çўхен витмелле. Вěсемпе ěçленě чух пахчаçăн хăрушсăрлăх техникине пăхăнассине асрах тытмалла.

Хальхи вăхăтра – ўсен-тăрансем тарăн ыйхăра чухне – улмуççисемпе ытти улмаçырла йывăççисен тураттисене тишкерсе тухмалла. Ку ěçе пурнăçлама кăçал юр тарăн марри те меллě кăна. Çак вăхăтра вěсем çинче пурçăн лěпěшěн, хитре лěпěшěн (боярышница), сарă кăкăр (нăрăн) çăмартисене асăрхама пулать. Вěсем пур туратсене асăрхасан çуркунне çитессе кěтмесěрех вěсене касса илмелле те çунтарса ямалла. Кунпа пěрлех улмуççисен вуллисене шăшисем ан кăшлаччăр тесе унта юр пухса таптаса лартмалла. Таптаса хытарнă юр кăшлакан чěр чунсемшěн пысăк чăрмав пулса тăрать. Хисеплě ял çыннисем! Çак ěçе тăвассине кая ан хăварăр. Ăна пурнăçлани йывăççен тымаррисене те ăшă парать.

Путвалсемпе хранилищěсенче упранакан çěр улми, пахча çимěç, тымар çимěç тěллěнтěллěн çěрнине курсан, унти продукцие кая юлмасăр суйласа илмелле.

Сивěсем пуçланнă май пахчасенче сырăшсем çакассине те ыранхи куна хăварас марччě. Паян çак ěççене пурнăçлани те çитес çул пахчара сахалрах чир-чěрпе нăрăсăтăрçăсем пуласса пěлтерет.

Кăшлакан пěчěк чěр чунсемпе (шăшисемпе йěкехўресем т. ыт. те) кěрешме бактероденцид препарат пысăк пулăшу парайрать. Вăл чěр чунсем çине çисен кăна витěм кўрет. Çак ятарласа хатěрленě тырăна çисен чěр чунсем хăйсем чирлеççě тата чире ытти сывă чěр чунсене ертеççě. Чирлě чěр чунсем 7-15 талăкра вилсе пěтеççě. Ку препарат çынсемпе килти выльăх-чěрлěхшěн, чăхчěпшěн сиенлě мар.

Халě асăннă препарата туянас текенсене «Россельхозцентр» ФГУн Чăваш Республикинчи филиалěн Муркаш районěнчи уйрăмěнче (подстанци çывăхěнчи унччěнхи вăрлăх инспекцийě) кěтетпěр. Пирěн телефон: 2-12-77. Коллективпа заявка паракансен ыйтăвěсене кěске вăхăтра тивěçтеретпěр.

Юбиляр район пурнăçěнче

# В.М. Александров çур ěмěрте

**АВТОРТАН. Иртнě çулхи юпа уйăхěн 11-мěшěнче районти паллă композиторăн тата мызыка ăстин Владимир Михайлович АЛЕКСАНДРОВĂН 50 çулне паллă турăмăр. Район историйěн паллă тапхăрě. Алă çул вăл паллă çул. Владимир Михайлович – паян район пурнăçěнче пиççе çитнě музыкçă. Унăн малаллахи пурнăçламалли ěçěсем вěççěррине алла хут купăс тытса е хорта тăрса унăн юррисене юрласа курнă кашни çын ăнланать. Мěнле тарăн тавра курăмлă вăл, музыка тěнчине чунěпе парăннă В. М. Александров. Унăн ěçěпе çывăхарах паллашсан пурнăç илемне, нотăсен вăй-хăватне çывăхарах туйса илетěн. Çакăн хыççăн кирек камăн та çěнě тěллевсем калăпланаççě. Район юбилейě умěн Владимир Михайловича чунтан тав туса çырнă йěркесем.**

Ěнтě утса тухрăн
Эсě 50 çул.
Утнăçемěн пухрăн
Тěлěнмелле мул.
Мулě санăн меллě,
Пухнă мул таса.
Çывхарать мехелě
Халě васкаса.
Тăрăшса ěçлерěн,
Эс пулман наян.
Пире тěлěнтертěн
Юрăпа паян.
Хута эрешлерěн,
Иртрě кунран-кун.
Ыванма пěлмерěн,
Чылай уçрăн чун.
Сан ахах-мерченě
Пулчěç юрăсем.
Чи хакли, тен, çěнě,
Анчах çырнисем.
Чăвашра янраççě
«Шурă акăшсем».
Чуна çутатаççě
Ăшă кěвěсем.
Сценăна усаççě
Паллă артистсем.
Уççăн шăратаççě
Чаплă юрăсем.
Эсě халь мухтавлă,
Ўсěмпе пуян.
Килсе тулнă шавлă
Хăнисем те сан.
Пурте саламлаççě,
Ăш сăмах калаç.
Ырă кун сунаççě,
Владимир Михалч!
Кăнтăрла иртсессěн
Хěвел те анать.
Çур ěмěр иртсессěн
Ěтем пусăрнать.
Анчах эс мăнаçлă,
Сывлăху патвар.
50 урлă каçрăн,
Маххăна ан пар!
Владимир Михалччă,
Халь ташла-юрла.
Пылпа сěр кулачă,
Хăнине сăйла.
Пултăр пурнăç тулăх,
Туслăх çемьере.
Ан хавшатăр сывлăх,
Ăнăçу – ěçре!

**Салампа КОВАЛЕВСЕМ.**
Атапай ялě.

Прокуратура хыпарěсем

# Ятсăр çырусем пирки

Юлашки вăхăтра район прокуратурине ячěсене палăртман çырусем чылай килме пуçларěç. Палăртатăп, вěсем ытларах хуравсăр юлаççě. Мěншěн тесен РФ Генеральнăй прокурорě приказпа çирěплетнě Раççей Федерацийěнчи прокуратура системине пыракан çырусене пăхса тухмалли инструкципе килěшўллěн çав çырусенче ыйтăва татса пама çителěклě кăтартусем паман пулсан, çитменлěхсене хушмаллине кăтартса автора 7 талăкра каялла тавăрса памалла. Енчен те çырăва вулама майě çук пулсан та, авторне пěлсен, çыру 7 талăкра каялла çаврăнса çитě. Хăратса, усал сăмахсемпе çырнă çыру хуравсăрах юлма пултарать.

Çавăнпа та пулăшу ыйтса çыру çыраканăн текста конкретлă та тирпейлě çырмалла. Çыру авторне, вăл ăçта пурăннине кăтартма та манмалла мар.

**Г. ЕРЕМЕЕВА,**
**прокурора пулăшакан.**